**Чăваш, ан пĕт**

Чăваш тесен хăшĕ кулать,
Хăш кулаканшăн хурланать.
Чăваш камне пĕлмесĕрех
Чăваш чăвашлах кулать.

Чăваш вырăсланса пырать,
Ют халăх йĕркине тытать,
Вырăс йăлине йышăнать.
Чăвашăн хăйĕн йăли пур
Хамрăн чĕлхе те пирĕн пур.

Чăваш тени пĕтсех пырать,
Чăваш вырăсалла тухать,
Анчах, ачсемĕр, тăрăшсан
Чăваш чĕлхи ялан пулать.

Чăваш, ан ман чĕлхемĕре,
Ан ман юратнă çĕр-шыва.
Чăваш ан пĕттĕр çĕр çинче
Вăл пулнă, пултăр ĕмĕре!

**Елена Александрова,**
**8 класс,**
**Очăкасси шкулĕ**




## ХĔЛЛЕХИ КАНИКУЛ АСРА ЮЛЧĔ

Хĕллехи каникул ман асра юлчĕ.

Ирех эпĕ тăраттăм та тӳрех урама тухаттăм. Кашни кун хамăн пиччепе юрпа вылянттăм. Урамра çунашкапа ярăнаттăм, киле каçпа çеç таврăнаттăм. Хĕлле юр нумай, эпĕ вара Хĕл Мучи, Юр пики тата юртан çуртсем тума юрататăп. Вĕсене кайран шывпа сирпĕтмелли кăна юлать.

**Иван АНАНЬЕВ,**
**5 класс,**
**Очăкасси шкулĕ**

## ХАÇАТĂН ЧЕРЕТЛĔ НОМЕРĔ НАРĂСĂН 8— МĔШĔНЧЕ ТУХАТЬ

# саламсем

Хастарлă çамрăка, маттур йĕлтĕрçе, Калайкасси шкулĕнче 10с класра вĕренекен Степанов Костьăна çуралнă кун ячĕпе саламлатăп. Ырлăх-сывлăх, телей, юрату, ăнăçу сунатăп. Пурнăç çулĕ санăн малашне те такăр пултăр. Çитĕнӳпе ăнăçу юнашарах пулччăр. Ĕ мĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçа кĕрсех пыччăр, тĕллевӳсем те пурнăçланччăр.

Салампа
Оля АКСЯНДАРОВА

Пĕрле вĕренекен юлташа, Соломина Таньăна çуралнă кун ячĕпе саламлалатăп. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, телей, юрату, ăнăçу сунатăп. Утас кун-çулу яланах такăр пултăр, ĕмĕтӳсем пурнăçланса пыччăр. Юлташсемпе килĕштерсе пурăнмалла пултăр.

**Салампа Оля АКСЯНДАРОВА**
**10 С класс, Калайкасси шкулĕ**

Эльвира Владимировна Портновăна, Александр Марсович Степанова, Владимир Николаевич Кожевникова тата хамăрăн шкул редакцинче ĕçлекенсене пичет ĕçченĕсен уявĕ ячĕпе саламлатăп.

**Оля КОШКИНА**

Пирĕн чи юратнă вĕрентекенĕм, Татьяна Аркадьевна! Сире çуралнă кун ячĕпе пĕтĕм чун чĕререн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр.

***8б класс ачисем,***
***Калайкасси шкулĕ***

## ШĂЛЛĂМ

Манăн килте шăллăм пур.
Вăл хăюллă та маттур.
Тем те тума пултарать:
Аннене те пулăшать
Урока та хăй тăвать.
Ывăнсассăн çывăрать.

**Петя НИКИТИН,**
**3 класс,**
**Калайкасси шкулĕ**

## АППА

Ман юратнă аппа пур
Вăл илемлĕ те сатур
Ăслă çын пулма хушать.
Йывăр чух вăл пулăшать
Çавăнпа эп аппана
Юрататăп чунтанах.

**Владимир Ухвин,**
**3 класс, Калайкасси шкулĕ**

## ЧĂВАШ ЧĔППИ

Эп пурнап в деревне
Летом çырла çиеп.
Йăванпа Елене
«Не завидуй», — теп.

Кантăка я гляжу,
Мĕн унта эп вижу?
Нăрăпа шăна дерутся,
Автанпа еще свинья.

Нăрă шăнана убил.
Çухăрчĕ вăл: «Эп не бил!»
Свинья автана побил,
Долго савăнса вăл жил.

**Маша Краснова**
**5 класс,**
**Калайкасси шкулĕ**

## ТĂВАН ЯЛĂМ

Кĕркунне çитсе килсен
Йывăç ылттăн тăхăнсан
Ялăм ларать ялкăшса,
Хĕвел пекех çуталса.
Урамри ача сасси
Пуринчен те чи уççи.
Кунĕпе пĕлмест канма
Унăн шухăшĕ — чупма.
Пирĕн ялăн çыннисен,
Пит ăнаççĕ ĕçĕсем.
Пĕчĕкки те пулăшса
Ĕçлет акă,тăрăшса.
Халалларăм эп сăвва,
Тăван ялăмăм — сана
Хам юратнă килĕме,
Хам юратнă кĕтесе!

**Татьяна СТЕПАНОВА,**
**8 класс,**
**Очăкасси шкулĕ**

## ХĔЛЛЕХИ ВĂРМАН

Шурă тутăрсем
çыхнă хурăнсем.
Пĕчĕк ăвăссем
илнĕ калпаксем.
Уй-хирпе пĕве
шурă кĕрĕкпе
Чăрăшпала хыр
симĕс кĕпепе.



## ЧĔРĔП

Пĕррехинче эпир, Санюк, Петюк тата Володя, кăмпана кайрăмăр. Пăхатпăр-хыр патĕнче çулçăсем куçаççĕ.Эпир çулçăсем хыççăн утатпăр. Пăхатпăр-чĕрĕп йĕпписем курăнаççĕ, ку вара чĕрĕп пулнă иккен. Эпир ăна киле илсе кайрăмăр, сĕт ĕçтертĕмĕр те вăрмана кайса ятăмăр.

**Александор ФОМИН, 3 класс,**
**Калайкасси шкулĕ**

## ЮРАТНĂ КУКАМАЙ

Пирĕн килте кукамай
Кунĕпех ĕçлет нумай:
Сыснасене çитерет,
Пăрушне апат сĕнет,
Кайран кăмак умĕнче
Икерч, кукăль пĕçерет.
Апатне çакса ярать.
Эх, мĕнле йăлтах тăвать?
Каçпала, шкултан çитсен
Сĕтел хушшине лартать,
Тутлă апат-çимĕçпе
Вăл пире тăрантарать.
«Ларса кан-ха кукамай», —
Тесен те эпир пĕр-май.
«Хăнăхман эп, — тет, — канма,
Ĕçсĕр канăç çук мана».
Юратап кукамая
Эсĕ тĕслĕх маншăн та.

**Маша РОДИОНОВА**
**5класс Калайкаси шкулĕ**